Алексей Трофимов

# ЭЛПИ ТĔРРИ

Элпи паян шкултан калама çук васкаса таврăнчĕ. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех вăл сумкине хучĕ те çип çăмхисем шырама пикенчĕ.

– Хĕрĕм, мĕн шыратăн? – ыйтать унран асламăшĕ.

– Асанне, тĕрĕ çиппisene ăçтарах пусçтарса хунă-ши? Шкулта выставка пулать. Лидия Александровна илемлетнĕ япаласем тума хушрĕ, – хуравлать хĕрача.

Часах асламăшĕ Элпие тĕслĕ çăмха тыттарчĕ.

– Тĕрле эппин. Анчах мĕн туса кăтартасшăн?

Элпи шухăша кайрĕ. Чăнах, мĕн тĕрлесен аванрах-ши?

– Хĕрĕм, тен, çыру тĕрри тăвăн?

– Çыру тĕрри? – тĕлĕнчĕ Элпи. – Мĕн, кăвак конвертсем ӳкермелле-и вара?

– Çук. Çыру тĕрри тесе ĕлĕкрех эреше калатчĕç. Халех акă кăтартатăп, – хушса хурать асламăшĕ.

Часах вăл хурăн хуппинчен тунă сунтăха уçса авалхи тĕрĕ илчĕ. Элпи хĕпĕртесе асламăшне тав турĕ. Тĕррине çавăра-çавăра пăхрĕ, çĕввисене пĕлесшĕн тăрăшрĕ. Кăшт вăхăт иртсен тĕрлеме пикенчĕ.

Уроксем хатĕрленĕ хыççăн Элпи кашни кун хăйĕн ĕçне тăвать. Унăн пĕчĕк пӳрнисем хушшинче хурçă йĕп выляса çеç тăрать. Вăл тĕрлĕ тĕслĕ çипсене çул кăтартса шур катан пир ăшне пĕр кĕрет те пĕр тухать. Çапла кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртрĕ. Тăрăшни сая каймарĕ. Элпи хăйĕн эрешне тĕрлесе пĕтерчех. Тĕрри вара çав тери илемлĕ пулса тухрĕ. Вăл асамат кĕперĕ евĕрлех. Хĕрлĕ те, сарă та, кăвак та, симĕс те пур унăн. Тĕрлĕ тĕслĕ пурçăн çипсем хĕвел çутинче пĕрчĕн-пĕрчĕн йăлтăртатса асамлăн курăнаççĕ.

Элпи тĕрри выставкăра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

*Трофимов, А. Элпи тĕрри : [калав] / А. Трофимов ; А. Ыхра хатĕрленĕ // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2000. – 15 кăрлач (№ 2). – С. 6.*